Таса шыв ыйтăвĕсемпе

# Мĕнле шыв ĕçетпĕр?

Çынсене пахалăхлă ĕçмелли шывпа тивĕçтерессипе пирĕн районта йывăрлăхсем сахал мар. Пур çĕрте те çĕр айĕнчи шыв сооруженийĕсем ĕçлеме пуçлани 30 е тата ытларах çул çитнĕ ĕнтĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче тунăскерсен 30 - 80 процентĕ таранах юрăхсăра тухнă. Скважинăсенчен нумайăшне проектсемсĕр тата ятарлă ирĕк панисемсĕрех тунă. Çавна май 2005-2006 çулсенче проект ĕçĕсем тума районта вырăнти бюджетран 604 пин тенкĕ тăкакланă. Пĕлтĕр республика бюджетĕнчен Вăрманкас Хачăкра скважина тума тата шыв пăрăхĕсем хума 5 миллион тенкĕ уйăрса пачĕç.

Анчах уйăрса панă укçа-тенкĕ шыв сооруженийĕсене çĕнетсе юсама çителĕксĕр. Сооруженисем юрăхсăра тухса пыраççĕ, шывăн пахалăхĕ те чакать.

Кăçалхи тĕрĕслевсем мĕн кăтартрĕç-ха? Пирĕн территоринчи скважинăсенчен 64-шĕн çеç санитарипе эпидемиологи правилисене тивĕçтерекен пĕтĕмлетӳсем туни пур. Ку вăл пур скважинăсен 34 процентчĕпе танлашать. Асăнса хăварар-ха вĕсене: «Оринино» хуçалăх территорийĕнчи 11 скважина, «Герой» хуçалăхра – 6, «Востокра» – 4, Андреев яч. хис. – 4, К. Иванов яч. хис. – 11, Ильич яч. хис. – 4, «Муркашри сĕт завочĕ» – 2, «Сундырь-Хлеб» – 1, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх – 6, Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăх – 9, «Ильинский» ача-пăча сывлăх лагерĕ – 1, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики – 4, Муркаш райповĕ – 1.

Кăçалхи 9 уйăхра скважинăсенчен усă куракан шывăн санитарипе хими кăтартăвĕсене тĕрĕслеме 76 тĕслĕх илнĕ. Вĕсенчен 12 тĕслĕхĕ вара гигиена нормисене тивĕçтермест тесе хакланă. Шыв пăрăхĕсенчен илнĕ 109 тĕслĕхрен 9-ăшĕнче бор, лити, пăтранчăк тата тĕс улшăнăвĕ палăртнă санитарипе хими кăтартăвĕсенчен ытларах пулнă. Бор тата лити çын сывлăхĕшĕн хăрушă шутланаççĕ. Çавăнпа та вырăнти самоуправлени органĕсен пĕр тăхтамасăрах шыв тасатмалли ятарлă меслетсемпе ĕçлеме пуçламаллине йышăнмалла.

Маларах асăннă тапхăрта шыв пăрăхĕсенчен илнĕ 522 тĕслĕхрен 42 тĕслĕхĕ микробиологи енĕпе гигиена правилисене пăхăнса тăмасть. Çапла Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕр тата коммуналлă хуçалăхсенче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче, Муркаш районĕнчи 2 № больницăра, Каршлăхри ваттисен çуртĕнче, Шетмĕпуç ял тăрăхĕнче тата «Ударник» хуçалăхра шыв пахалăхĕ япăхланса пыни çинчен калама пулать.

Вырăнти администрацисем çăлсене юсас тата вĕсен таврашĕнче тирпей-илем кĕртессипе ĕçлемеççĕ. Кăçал çăлсенчен илнĕ 12 шыв тĕслĕхĕнчен СанПиН ыйтнисемпе 1 тĕслĕх килĕшсе тăмасть. Çăлсенчен илнĕ 13 тĕслĕхрен 5-шĕн микробиологи кăтартăвĕсем гигиена нормисемпе килĕшсе тăмаççĕ (Москакасси, Шетмĕпуç, Çатракасси, Мăн Сĕнтĕр тата Муркаш ял тăрăхĕсенчи пĕршер тĕслĕх).

Скважинăсенчен шыв пырассинче кăлтăксем е авари пулас пулсан вара шыва çăлсенчен илме тивĕ. Каларăмăр ĕнтĕ, шыв сооруженийĕсем питĕ кивĕ. Дезинфекцисене вăхăтра тумалла, санитарипе техника пахалăхĕ те кирлĕ шайра мар. Нихăш ял тăрăхĕнче те шыв башнисене пăхса тăракан ятарлă служба çук.

Çынсене ĕçмелли шывпа тивĕçтерес законодательствăна пăснăшăн кăçал «Сеспель» предприяти, «Воюн» хуçалăхăн ертӳçи тата Мăн Сăнтĕр райповĕн тĕп инженерĕ тĕлĕшпе административлă правăна пăснăшăн йышăну тумалла пулчĕ. Çак сăлтавпах Муркаш райповĕн пылак апат-çимĕç цехĕн ĕçне те вăхăтлăха чартăмăр. Шетмĕпуçĕнчи шкулта вара сывлăхпа кану лагерĕн иккĕмĕш смени уçăлмарĕ.

Малашне çынсене таса шывпа тивĕçтерессине кирлĕ пек туса пырасчĕ. Хамăрăн сывлăхшăн тăрăшасчĕ.

**Г. ВОРОБЬЕВА,**
**Чăваш Республикинчи «Роспотребнадзор» территори уйрăмĕн Муркаш районĕнчи тĕп специалист-эксперчĕ.**

Паян – Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунĕ

# Куç курмасан та чун туять

Вĕсен ăш пиллĕхĕ, пĕчĕк ачасенни пекех таса чунĕ, маттурлăхĕ сывă çынсене тĕлĕнтерет те , хавхалантарать те. Куç курманнисем пирки сăмахăм. Ĕççĕр ларма юратман, тавралăхпа киленсе пурнăçне илемлетме пĕлекен, тĕнчере ыррине ытларах курма тăрăшакан, çав вăхăтрах нуша тути-масине туйса пурăнакан хăйне евĕр çынсем вĕсем.

Муркашри сусăр çынсен обществăлла организацийĕнче 4 çул ĕçлетĕп. Организаци Элĕкпе Муркаш тăрăхĕнчи 200 ытла сусăр çынна пĕрлештерет.

Кăçал Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕпе – Ырă ĕçсен çулталăкĕ. Пулăшакана Турă та пулăшать теççĕ. Хăш-пĕр предприяти-организаци пуçлăхĕсем çак сăмаха манманни савăнтарать. Вĕсене пурне те пысăк тав. Пирĕн организацие çапла пулăшса пынăран тĕрлĕ уяв, ăмăрту е конкурс ирттернĕ хыççăн инвалидсем килĕсене хавхаланнуллă кăмăлпа саланаççĕ. Тепре хăçан пуçтарăнасса кĕтсех пурăнаççĕ вара.

Сусăр çынсен пултарулăхĕ пирки те çырса пĕлтерес килет. Акă çулла çеçха Шупашкарта «Леди ВОС» конкурс иртрĕ. Куç курманнипе аптăракансем тĕрлĕ районтан пухăнчĕç унта, пурĕ 13 çын ăмăртрĕ. Пирĕн пĕрлешĕве çӳрекенсем виççĕн – Елена Пушкина, Маргарита Пушкарева, Анастасия Михайлова – хутшăнчĕç çак конкурса, пурте дипломсене тивĕçрĕç. Москакассинче пурăнакан Елена Александровна Пушкина, 1-мĕш ушкăн инваличĕ, юрри-ташшипе, тутлă апат-çимĕçпе пурне те тĕлĕнтерчĕ. 76 çулхи хĕрарăм сцена çинче чăвашсен капăр çи-пуçĕпе çав тери илемлĕн курăнчĕ.

Пурнăç тени юлашки вăхăтра самай хăвăрт улшăнса пырать. Ырри çук марха, çав вăхăтрах кăмăла хуçаканни те тупăнсах тăрать. Куç курман çыншăн тĕнчере мĕн пулса иртнине пĕлмешкĕн чи мелли – радио. Анчах хальхи вăхăтра ялсенче радио «калаçмасть». Çакна мĕншĕн пăрахăçларĕç-ха? Тепĕр тесен сывă ял çыннин те телевизор умне вырнаçса ларма, хаçат-журнал алла тытма ялан вăхăт тупăнаймасть. Пур япалана та укçа-тенкĕ тăкакĕ çине çеç сулни килĕшӳллĕ-ши? Чунпа хытсах ларас марччĕ.

Шăпа мĕнле килсе тухасса никам та татса калаймасть. Çавăнпа ют çын нуши-тертне куç хупса йышăнар мар, пĕр-пĕрне ăнланса пурăннине мĕн çиттĕр? Ырри çинчен ытларах шухăшласчĕ. Манăн ку тĕлĕшпе çакăн пек йĕркесем çуралчĕç:

Ырă çын çĕр çинче пурăнать,
Кунран-кун ырă йĕр хăварать.
Пурнăç шав малалла талпăнать,
Ыррине ĕненсен – çын пурнать...
Пĕр-пĕрне ăнланса пурăнсан,
Тус-юлташ пĕр-пĕрне пулăшсан,
Сар хĕвелĕ пире савăнтарĕ,
Малалла талпăнмах ырлăх парĕ.

**Елена НИКИТИНА,**
**Муркашри куç курманнисен обществин секретарĕ.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Ĕçре, уявра – амăшĕсемпе пĕрле

«Малыш» ача сачĕ хăйĕн ĕçне пĕрремĕш çул мар ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăнса туса пырать. Акă иртнĕ эрнере те садикре «Уçă алăксен кунĕ» иртрĕ. Ăна ашшĕ-амăшĕсем хăйсен пепкисем садикре мĕнле лару-тăрура аталанса пынипе, воспитательсен ĕçĕпе тĕплĕнрех паллашчăр тесе йĕркелерĕмĕр.

Мероприятие Амăшĕсен кунне те халалларăмăр. Пирĕн садике çӳрекен ачасен амăшĕсем тата асламăшĕсем йышлăн килни савăнтарчĕ, садик ĕçĕ патне тимлĕх пуррине кăтартса пачĕ. Уява пуçтарăннисене малтанах садик ертӳçи саламларĕ. Унтан В. Гусева воспитатель интереслĕ конкурссем ирттерчĕ: татăксенчен карнавал костюмĕсене те ăсталарĕç асаннесем-амăшĕсем, ташă маçтăрĕсем пулнине кăтартрĕç тата ыт. те.

Асăнмалăх маттуррисене Тав çырăвĕсем парса чысларăмăр. Уява килнисене аслă ушкăнри ачасем концертпа тата парнесемпе саламларĕç.

**М. ИВАНОВА,**
**«Малыш» ача сачĕн ертӳçи.**


Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:070502:162, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части квартала 21:17:070502, площадью 6246 кв.м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на них:

- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:150501:107, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Лебедкино, участок расположен в юго-западной части квартала 21:17:150501, площадью 6000 кв.м.;
- земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:150501:106, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, д. Лебедкино, участок расположен в юго-западной части квартала 21:17:150501, площадью 6000 кв.м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:101601:848, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в северной части квартала 21:17:101601, площадью 6000 кв.м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:180202:0102, местоположение: участок находится примерно в 366 м по направлению на северо-запад от ориентира ОМЗ-424, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, с. Акрамово, ул. Мира, площадью 6000 кв. м.

Заявления от организаций и граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.



Пĕлтерӳсем. Объявления

Грузоперевозки: Газель «Фермер», длина кузова 3 метра. По России. Тел.: 8-927-841-39-03, 8-903-066-15-49.

Диплом ЛТ № 366853, выданный НОУ СПО «Чебоксарский кооперативный техникум» от 28 июня 1988 года на имя Алексеевой Венеры Николаевны, считать недействительным.

Куплю земельные доли, расположенные на территории СХПК им. Ленина, дорого. Тел.: 8-927-849-79-54. Александр. 1-2.

Продаю автомашину ВАЗ-2107 1995 года выпуска, в отличном состоянии. Недорого. Тел.: 8-906-133-28-79. 1-2.

Пĕрре пăрулана хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-919-665-67-64.

ООО «Энергосервис», расположенный у д. Москакасы в д. Ландыши, реализует по сходной цене железобетонные кольца для колодцев и выгребных ям и оказывает услуги по бурению. Предновогодняя скидка 10% до 20.12.2008 года. Требуются на работу электрогазосварщики. Тел.: 60-2-39, 8-905-342-98-11. Администрация.

КПКГ «Заря-Кредит» принимает сбережения от пайщиков на выгодных условиях по адресу: остановка Москакасы, здание «Автомиг», 2 этаж. Тел.: 66-2-16, 8-937-370-23-69. 3-11.

Мир окон и дверей
29-80-60
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя Чувашии теперь... в МОРГАУШАХ
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60
Набор по уходу за окнами и москитная сетка – в подарок! Скидка до 25 %.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 12-13.

Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95. Спутниковый интернет. 10-20.

Март уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатăп. Тел.: 2-16-17, 8-906-134-73-42.

Анаткас Апаш (Соляной) ялĕнче йывăç пӳрт сутатăп, 6мх6мх6м виçеллĕ пилĕк стеналлă пӳрт. Тел.: 8-905-340-09-70.

12 декабря в РДК с. Моргауши состоится большая распродажа таможенного конфиската. Верхняя зимняя одежда, а также обувь в ассортименте. Ждем вас с 10-00 до 16-00 часов. Наши цены вас приятно удивят. Кострома. 1-3.

Продаю трехдверный шифоньер с антресолью, две 1,5 спальные кровати с пружинным матрацем, все одинакового цвета, в отличном состоянии, недорого. Тел.: 8-906-387-77-08, 2-12-82, 2-22-40.

Участница долевой собственности Викторова Юлия Ивановна, 15.11.1960 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, с. Большой Сундырь, ул. Новая, д. 32, кв. 1 сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Сундырский», расположенного в поле № 4, полевой севооборот № 4 площадью 22,27 га пашни.

Все возражения по месту расположения земельного участка прошу направлять по адресу доверенного лица: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Афанасьева, д. 12, кв. 77, Федоровой Светлане Владимировне ценным письмом с вложением.

Участница долевой собственности Одинцова Любовь Пантелеймоновна, 13.08.1931 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Кармыши, ул. Центральная, д. 27 сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК «Сундырский», расположенного в поле № 3, полевой севооборот № 1, рабочий участок № 1 площадью 1,31 га пашни.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Большесундырского сельского поселения.
2. Одинцовой Любови Пантелеймоновне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Кармыши, ул. Центральная, д. 27.


«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ Людмила Вениаминовна Бельская бухгалтерăн ашшĕ
**Вениамин Петрович ПЕТРОВ**
вăрçă участникĕ, ĕç ветеранĕ, пенсионер нумай вăхăт хушши чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 02.12.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3608.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.